Утверждаю
Проректор БОУ ДПО (ПК) С
«Чувашский республиканский
институт образования»
Минобразования Чувашии
..........А.Р. Фёдорова
«22» декабря 2015 г.

## Единый республиканский экзамен
## ПО РОДНЫМ ЯЗЫКАМ И ЛИТЕРАТУРЕ

**Демонстративный вариант**

контрольных измерительных материалов
единого республиканского экзамена 2016 года
по ЧУВАШСКОМУ ЯЗЫКУ И ЛИТЕРАТУРЕ

Подготовлен кафедрой чувашского языка и литературы
БОУ ДПО (ПК) С «Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашии

2016 çулта 11 класс пĕтерекенсене

**чăваш чĕлхипе тата литературипе**

республикăн пĕрлехи экзаменне

тыттармалли материал

**Тĕслĕх вариант**

Район.............................................................................................

Хула (ял, поселок).........................................................................

Шкул..............................................................................................

Класс.............................................................................................

Ачан хушамачĕ...................................................................................

ячĕ..................................................................................................

ашшĕ ячĕ.......................................................................................

## Тĕслĕх вариант

Чăваш чĕлхипе тата литературипе экзамен ĕçне çырма 3 сехет те 30 минут (210 минут) параççĕ. Ĕç 3 пайран тăрать.

1-мĕш пая 32 ыйту кĕртнĕ: 16-ăшĕ – чĕлхепе, 16-ăшĕ – литературăпа. Вĕсене хуравлама 4 вариант сĕннĕ. Çак 4 вариантран пĕр хуравĕ кăна тĕрĕс.

2-мĕш пайра 8 ыйту (В1 – В8): 4-ăшĕ – чĕлхепе, 4-ăшĕ – литературăпа. Вĕсене Эсир хăвăр тĕлленĕх хуравламалла.

3-мĕш (С1) пайра пĕр ĕç кăна – хатĕр текста тишкерсе пĕчĕк ăслав сочиненийĕ çырасси.

Ĕçсене тунă чухне вĕсене мĕнле йĕркепе панă, çав йĕркене тытса пыма сĕнетпĕр. Вăхăтпа перекетлĕ усă курмалла пултăр тесен – тӳрех тума çук ĕçе сиктерсе хăварăр та черетри тепĕр ĕçе тăвăр. Енчен те пĕтĕм ĕçе тунă хыççăн кăшт вăхăт юлсассăн – сиктерсе хăварнă ĕçсем патне тепĕр хут таврăнма юрать.

Ĕç кăткăслăхне кура кашни тĕрĕс хуравшăн пĕр е ытларах балл параççĕ. Эсир пухнă балсене кайран пĕрле хушаççĕ. Май пур таран нумайрах ĕç туса нумайрах балл пухма тăрăшăр!

***Ăнăçу пултăр Сире!***

### 1-мĕш пай

---

Ку пайри (А1 – А32) ĕçсене тума хăвăр хуравăрпа тӳр килекен цифрăна çаврашкапа çавăрса паллă тумалла.

---

А1. *Ĕлке* сăмахри 4-мĕш сасă мĕнле сасă?

1) ялан янравлă çемçе хупă сасă
2) янравлăх туяннă хытă хупă сасă
3) ялан янравлă хытă хупă сасă
4) янравлăх туяннă çемçе хупă сасă

А2. Антонимлă сăмахсем хăш мăшăрта тĕл пулаççĕ?

1) иккĕ пус, вунă пус
2) кĕске кун, вăрăм ĕмĕр
3) ырхан лаша, пысăк çурт
4) уяр çанталăк, кăвак тӳпе

А3. Евĕрлев сăмахĕ çумне аффикс хушăннипе пулнă иккĕмĕшле сăмах хăшĕ?

1) çăкалăх 2) мухтав 3) вăшăлтат 4) туслăх

А4. Паллă тунă сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулать?

*Сап-сарă пучахсем **çиййĕпе** хумханса ăрша юхать.*

1) япала ячĕ 2) паллă ячĕ 3) хыç сăмах 4) наречи

А5. Йăнăш хăш предложенире пур?

1) *Çутă хĕвел анăç енне кайнă ĕнтĕ.*
2) *Тимрук таврари ялсене çӳресе эрне irттерчĕ.*
3) *Мускавран килнĕ укçа-тенкĕне ача сачĕсем тума яраççĕ.*
4) *Шерккей укçине кăларам пек турĕ.*